## ҪĔРШЫВ ИЛЕМĔ

Сăвви *В. И. Давыдов-Анатрин*





вас.ка.са у_ таç_çĕ ту_лă пус_ си_ не, пус_си_не.
Хас_·тар кач_чă_сем, çам_рăк пи_ке_ сем
вас_ка_са у_ таç_çĕ ту_лă пус_ си_ не, пус.си_
1. 2
_не.
3
_ре!



1. Чĕвĕл чĕкеçсем,
Çепĕç шăпчăксем.
Савăнса юрлаç янкăр ирхине.
Хастар каччăсем,
Çамрăк пикесем
Васкаса утаç (çĕ) тулă пуссине. } 2 хут

2. Ылтăн уй-хирсем,
Ешĕл вăрмансем
Тухайса тăраç пирĕн куç умне.
Çутă кӳлĕсем,
Хумлă тинĕссем,
Чыс-илем кӳреç (çĕ) Совет çĕршывне. } 2 хут

3. Ырă шухăшсем,
Çĕнĕ ĕмĕтсем
Ялкăшса çунаç пирĕн чĕрере.
Хаклă тантăшсем,
Çывăх тусăмсем
Мухтаса юрлар (-ха) чаплă ĕмĕре! } 2 хут

# ЭП ÇУРАЛНĂ КУНТА, РАÇÇЕЙРЕ

Сăвви *В. И. Давыдов-Анатрин*




f
-ра чун уҫ-ҫи- ҫур- кун- не, мӗн-ле
ы- рӑ тӑ-ван кӗ-тес- ре.. Мӗн-ле
ы- рӑ тӑ-ван кӗ-тес- ре,- эп ҫу-
1.2.3.
рал- нӑ кун-та, Раҫ-ҫей- ре!




1. Эп тухатăп куллен, ирхине,
Атте лартнă улма пахчине.
Таврара чун уççи — çуркунне,
Мĕнле ырă тăван кĕтесре,— } 2 хут
Эп çуралнă кунта,
РАÇÇЕЙРЕ.

2. Эп утатăп куллен, ирхине,
Ылтăнах та ыраш пуссине,
Ытарма çук уй-хир илемне,
Савăнса авăтать путене.
Ушкăн-ушкăн чĕкеç пĕлĕтре,—
Эп çуралнă кунта,
РАÇÇЕЙРЕ.

3. Эп каятăп куллен, ирхине,
Сăр вăрманĕн Сăрнай ĕшнине.
Хурăнсем пуç таяç ман енне,
Саламлаççĕ чăваш ачине.
Сар хĕвелĕ вылять тÿпере,—
Эп çуралнă кунта,
РАÇÇЕЙРЕ.

4. Эп тăратăп куллен, ирхине,
Мĕн пур халăхпала ĕç умне.
Вăйлăлан эс, çĕршывăм-анне,
Сана манмăп нихçан, ĕмĕрне.
Çутă ĕмĕт сÿнмест чĕремре,—
Эп çуралнă кунта,
РАÇÇЕЙРЕ.

## ÇАМРАК СТРОИТЕЛЬСЕН ЮРРИ

Сăвви *В. И. Давыдов-Анатрин*

**Марш темпĕпе**





mf
1. Тан_ тăш_се_ мĕр, ан ўр_ ке_ нĕр,— вăй пур çам_ рăк
ă_ ру_ ра. Ку_ нĕн-çĕ_ рĕн ĕç вĕ_ ре_ тĕр
пи_ рĕн ас_лă строй_кă_ ра
Припев (хор)
f
Пур_ те ай_ тăр
йыш_ па_ ла ĕç_ лер ха_ лĕ у_ лăп_ ла:


пи_рĕн ха_ мăр çĕр_шыв_ра, çĕр_шыв_ра,
çĕр_шыв_ ра... Пи_рĕн ха_ мăр çĕр_шыв_ра
ком_му_ ни_ з(ă)м ту_ мал_ла. Эй, яш_ кĕ_ рĕм_
-çам_ рăк çар, пул хă_юл_лă, пул хас_тар!
8

1. Тантăшсемĕр, ан ÿркенĕр —
Вăй пур çамрăк ăрура.
Кунĕн-çĕрĕн ĕç вĕретĕр
Пирĕн аслă стройкăра.

Хушса юрламалли:

Пурте атьăр йышпала
Еçлер халĕ улăпла:
Пирĕн хамăр çĕршывра (2 хут)
Коммунизм тумалла.
Эй, яш-кĕрĕм — çамрăк çар,
Пул хăюллă, пул хастар!

2. Хăват патăр, чуна савтăр
Чаплă ĕмĕр кун çути.
Вăй-хал илтĕр, çунат сартăр
Еçпе туслăх бригади.

Хушса юрламалли.

3. Çĕршыв вăйлă пуян пултăр,
Тĕлĕнтертĕр тĕнчене.
Пĕрле тунă ырă пурнăç
Сиплĕх патăр чĕрене.

Хушса юрламалли.

## КАҪХИ ИЛЕМ

*Сăвви В. И. Давыдов-Анатрин*




Çав_нă ту_ сăм, эс тух_самч_ чĕ пĕр_ле ю_рă юр_ла_
_ма, юр_ла_ма. Эх, мĕн чух_ лĕ кĕ_мĕл çăл_ тăр
çи_çет пĕ_лĕт тӳ_пин_ че. Лăп_кă кӳ_ лĕ йăл_тăр_




1. Сад пахчийĕ чечек сарчĕ,
Мĕнле ырă сывлама.
Савнă тусăм, эс тухсамччĕ
Пĕрле юрă юрлама.

Хушса юрламалли:

Эх, мĕн чухлĕ кĕмĕл çăлтăр
Çиçет пĕлĕт тӳпинче.
Лăпкă кӳлĕ йăлтăр-йăлтăр
Вылять улăх варринче.

2. Çӳлте ылтăн çурла уйăх
Шăвать пĕлĕт хушшипе.
Эп куратăп: каçхи улăх
Ташлать унăн çутипе.

Хушса юрламалли.

3. Пирĕн савăк, ирĕк юрă
Вĕçтĕр-кайтăр инçене.
Каçхине те эс, çĕршывăм,
Çухатмастăн илемне.

Хушса юрламалли.